Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

63-64 (7805-7806) №№ * Юн кун, 2010 ҫулхи ҫурла (август) уйăхĕн 11-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Ĕҫ ăнăҫăвĕ – пĕрле пулнинче

Вырма-2010



Типĕ те шăрăх ҫанталăка пăхмасăрах районти ял хуҫалăх предприятийĕсем вырмана кĕске вăхăтра тата ҫухатусемсĕр ирттерессишĕн вăй хучĕҫ. Ҫурла уйăхĕн 9-мĕшĕ тĕлне ял хуҫалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуҫалăхĕсене вырман пĕтĕмĕшле калăпăшĕн (6737 гектар) 94,1 процентне вĕҫленĕ. Гектар пуҫне тивекен вăтам тухăҫ бункер виҫипе хальлĕхе 9 центнер.

Вырмана ăнăҫлă ирттернĕ хуҫалăхсем хушшинче «Оринино» ял хуҫалăх производство кооперативĕ те. Хуҫалăх пĕтĕм вăй-халпа уй-хирте тимлерĕ. Эпĕ хуҫалăх хирĕсене ҫитнĕ кун тĕлне Орининсем юлашки гектарсене выратчĕҫ.

– Тырă сахал тухать тесе алă усмарăмăр. Мĕн туса илнĕ – йăлтах хамăрăн. Ҫакна кашниех ăнланса ĕҫлерĕмĕр, – терĕ бункертан пушатнă тырăна черетлĕ рейспа йĕтем ҫине турттарса кайма хатĕрленнĕ май Мефодий Михайлович Колбасов водитель (**пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре**).

Ҫĕр ĕҫченĕ автомашина рулĕ умне ларнăранпа чĕрĕк ĕмĕр хыҫа юлнă та ĕнтĕ. Ҫак хушăра пуян опыт пухнăскер паян ҫамрăксемшĕн кашни ĕҫрех тĕслĕх вырăнне.

Пĕр автомашина таппраннă май хире тепри ҫитрĕ. Унпа пĕрлех ĕҫлекен «хир карапĕсем» те чарăнчĕҫ. Кăнтăр апачĕ пулчĕ ку.

– Пирĕн Тамара ку. Кăнтăр апачĕпе яланах вăхăтра ҫитет. Ĕҫлекен ҫыншăн апатран пахи ҫук, – терĕ Тамара Геннадьевна Михайлова (**иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре**) аллинчен апат чашăкĕ илнĕ май Анатолий Кузнецов комбайнер.

Вунă ҫул хуҫалăх столовăйĕнче вăй хуракан Т. Михайлова повар хуҫалăх ĕҫченĕсем хушшинче ырă ята ĕҫпе тивĕҫнĕ. «Вырма пĕрле пулма ыйтать. Кашни хăй вырăнĕнче пулсан йывăрлăхсем те парăнаҫҫĕ», – терĕ апатланакан механизаторсем ҫине пăхса повар.

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕсем.**



Раҫҫейре

## 30 процентран ытла ӳстерме чарнă

Раҫҫей премьер-министрĕ Владимир Путин алă пусса ҫирĕплетнĕ «Социаллă пĕлтерĕшлĕ тата куллен кирлĕ апат-ҫимĕҫĕн пĕр пайне ваккăн сутнă чухне чи пысăк хакне палăртмалли йĕрке ҫинчен» йышăну вăя кĕнĕ. Унпа килĕшӳллĕн патшалăх хăш-пĕр таварăн ваккăн сутнă чухнехи хакне чакарма е ӳстерме пултарать. Списока 24 тĕрлĕ апат-ҫимĕҫ кĕртнĕ: ҫăнăх, ҫăкăр, ашкакай, пулă, услам ҫу, тип ҫу, сĕт, ҫăмарта, тăвар, сахăр, хура тул, вир кĕрпи, ҫĕр улми, купăста, пуҫлă сухан, кишĕр, пан улми... Хаксене мĕнлерех йĕркелесе тăрассине те уҫăмлатнă.

Федерацин вăл е ку регионĕнче асăннă апат-ҫимĕҫĕн хакне пĕр уйăхра 30 процент ытла ӳстерне тупса палăртсан таварăн чи пысăк хакне ҫирĕплетессине федераци органĕ хăйĕн ҫине илет. Вара Мускав палăртнă хаксене субъектра 3 уйăх пăхăнма тивет.

Пĕр уйăхра 30 процент таран ӳстерме ирĕк панă. Пысăк мар ĕҫ укçи илекен Чăваш Енре те 30 кунра ҫавăн чухлĕ хăпартма юрать. Нумай мар-ши?

Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ

## Чăваш Республикинче пурăнмалли ҫурт-йĕр хакне йӳнетес тĕлĕшпе хушма мерăсем ҫинчен

Чăваш Республикинче пурăнакансен хваттер условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе патшалăх енчен пулăшмалли мерăсене анлăлатас тĕллевпе **ҫапла йышăнатăп**:

1. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн: пĕтĕмĕшле лаптăкăн пĕр тăваткал метрĕн хакĕ Раҫҫей Федерацийĕн Регионсен аталанăвĕн министерстви Чăваш Республики валли ҫирĕплетнĕ пурăнмалли хваттерĕн пĕтĕмĕшле лаптăкĕн пĕр тăваткал метрĕн рынокри вăтам хакĕнчен ытла мар хакпа пурăнмалли хваттерсем (малалла эконом-класс йышши пурăнмалли хваттерсем) тăвас енĕпе мерăсем йышăнмалла;

вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче хваттер условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе шута илнĕ граждансене эконом-класс йышши пурăнмалли хваттерсем сутмалли йĕркене туса хатĕрлемелле.

2. Ҫакна палăртас: эконом-класс йышши пурăнмалли хваттерсем тунă чухне Чăваш Республикин коммерци тĕлĕшпе усă куракан пурăнмалли патшалăх ҫурт-йĕр фондне туса хумалли йĕркене шута илес.

3. Чăваш Республикин Хула строительствипе общество инфратытăмĕн аталанăвĕн министерствин пурăнмалли ҫурт-йĕр рынокĕнче эконом-класс йышши пурăнмалли хваттерсен шутне ӳстерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнмалла.

4. Коммерци банкĕсене эконом-класс йышши пурăнмалли хваттерсем туянакан граждансене ипотека кредичĕсем панă чухне ҫăмăллăхсене тата илĕртӳлĕхне ӳстермешкĕн йышăнусем тума сĕнес.

5. Ҫак Указ ăна официаллă майпа пичетленĕ кунран пуҫласа вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

Шупашкар, 2010, ҫурла, 6, 92 №.

Ыр кăмăллăх

## Йывăрлăхрисене пулăшма

Парти инкеке лекнисене пулăшма укҫа-тенкĕ пухассине йĕркелесси пирки пĕлтернĕ юн кун, августăн 4-мĕшĕнче, «Пĕрлĕхлĕ Раҫҫей» («Единая Россия») партин Аслă канашĕн председателĕ Борис Грызлов:

«Туссем! Пире, Раҫҫей ҫыннисене, пурне те пысра тивнĕ инкеке пула шар курнисене пулăшма эпир паян ятарлă счет уҫрăмăр.

Темиҫе эрне ĕнтĕ Раҫҫейре пушарсем алхасаҫҫĕ. Вăрмансем, торфлă шурлăхсем ҫунаҫҫĕ, ирĕке кайнă ҫулăм темиҫе минут хушшинче ялсене пĕтерет. Пушарсене пула 14 регион шар курнă, 2000 ҫурта яхăн ҫунса кайнă. Эпĕ сире, парти енĕпе хамăн соратниксене, ҫапла чĕнсе калатăп: урăх ҫын хуйхи сирĕншĕн ют ан пултăр».

Укҫа парса пулăшмалли реквизитсем ҫапла:
Получатель: ИНН 7709312370 КПП 770901001
МОФ поддержки Партии «Единая Россия»
Банк получателя: АКБ «ПЕРЕСВЕТ» (ЗАО) г. Москва
к/с 30101810700000000259 БИК 044585259
Р/С 407 038 100 000 100 001 85
Назначение платежа:
Добровольное пожертвование на оказание помощи семьям погибших и пострадавших в результате пожаров летом 2010.
НДС тытмаҫҫĕ.

Ҫанталăк

## Инкексемсĕр мар

Тахҫантанпах ĕнтĕ ҫанталăк шăрăх тăрать, ҫумăр ҫумасть. Ҫавна май кӳршĕллĕ Ҫармăс Республикинче, ытти регионсенче пушарсем алхаснине пурте пĕлетпĕр. Темиҫе хутчен те район тĕтĕм айне путрĕ.

Кун пек типĕ ҫанталăк хыҫҫăн вара ҫумăрĕ те синкерлĕ пулма пултарать. Ҫакна августăн 8-мĕшĕнчи аслатиллĕ ҫумăр та кăтартса пачĕ. Акă район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕҫлекен пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх ҫав кун аҫа ҫапнине пула Мулкачкассинче пĕр хуҫалăх тĕппипех ҫунса кайнă. Муркашри Октябре 50 ҫул урамра 44-мĕш ҫуртра пурăнакансем те шар курнисем пур. Ҫиҫĕме пула пĕрисен телевизор, теприсен компьютер юрăхсăра тухнă. Парковая урамра вара вăйлă ҫил 5-мĕш ҫуртăн ҫивиттине «сӳме» тытăннă. Ҫӳлтен вĕҫсе аннă шифер урамри автомашинăна сиен кӳнĕ.

Ҫавăнпа та пурин те пушар хăрушсăрлăхĕ, тимлĕх пирки манма кирлĕ мар. Аслатиллĕ ҫумăр вăхăтĕнче электричество приборĕсене сӳнтерес пулать. Ытти хăрушсăрлăх правилисене те пăхăнмалла. Сыхланакана Турă та сыхлать тесе ахаль каламан.

Синоптиксем пĕлтернĕ тăрăх вара ку эрнере ҫанталăк сулхăнлатасси пирки шанма йывăр.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Ҫырăнтару

**Хаклă вулакансем!**

**Райхаҫата сентябрь уйăхĕнчен илсе тăма ҫырăнтарас тапхăр пырать. Паян-ыранах почтальонсемпе тĕл пулма тăрăшăр!**

Саламлатпăр



Хаклăран та юратнă ҫыннăмăра – Елшик ялĕнче пурăнакан **Евгений Алексеевич ПЕТРОВА** паян 74 ҫул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Юман пек ҫирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр сана. Телейпе ăнăҫу яланах юнашар ҫӳреччĕр, ĕмĕтӳсем ҫитсе пыччăр, ҫемйӳнте татулăха килĕшӳ хуҫаланччăр. Кун-ҫулу вăрăм та телейлĕ пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕ, мăнукĕ, кĕрӳшĕ, ҫывăх тăванĕсем.**

Прием граждан

### «Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕн обществăлла йышăну пӳлĕмĕнче граждансене 2010 ҫулхи август уйăхĕнче хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнаҫҫĕ

**Августăн 17-мĕшĕнче** – Владислав Григорьевич ДАНИЛОВ, политканаш членĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ.

**Августăн 20-мĕшĕнче** – Владимир Аркадьевич КАЛИНИН, политканаш членĕ, район администрацийĕн пуҫлăхĕн пĕрремĕш ҫумĕ, район администрацийĕн ял хуҫалăх пайĕн пуҫлăхĕ.

**Августăн 24-мĕшĕнче** – Платон Павлович ДАВЫДОВ, политканаш секретарĕн ҫумĕ, «Ударник» хуҫалăх директорĕ.

**Августăн 27-мĕшĕнче** – Игорь Васильевич НИКОЛАЕВ, политканаш членĕ, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ, Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуҫалăх производство кооперативĕн председателĕ.

# Хамăрах тасатса тирпейлерĕмĕр

Ял тăрăхĕсенче

***Чуманкасси ял тăрăхĕнче тасалăхпа тирпейлĕх ыйтăвне малти вырăна хума тăрăшаççĕ. Çынсем те çакă пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине, тасалăхпа тирпейлĕх хамăршăнах пулнине, ăна пирĕн хамăрăн тумаллине аван ăнланаççĕ.***



Карманкасси ялĕ питĕ илемлĕ вырăнта вырнаçнă. Яла çити асфальт çул сарăлса выртать, ял тăршшĕпех пĕвесем, йĕри-тавра йывăçсем кашласа лараççĕ.

Кăçал çанталăк шăрăх та çумăрсăр тăнă май ялти пĕвесем типме пуçларĕç, çăлсенчи шыв та чакрĕ. Пĕвесем йĕри-тавра темĕн чухлĕ ăпăр-тапăр тухса выртрĕ. Ял илемĕ тĕксĕмленчĕ. Пĕве хĕрне кĕпе çума кайма та кăмăл пĕтрĕ. Шывĕ те тасамарланчĕ...

Вырăнта пурăнакансен чунĕсем чăтаймарĕç пулмалла, тавралăха тасатма шутларĕç. Чи малтан Вера Афанасьева хăйĕн 4 ачине ертсе тухрĕ. Кайран вара эпир те пĕрле пуçтарăнтăмăр, каç пуличченех ĕçлерĕмĕр.

Тепĕр кунне кунти тимĕр-тăмăра, вак чулсене тата ытти çӳп-çапа трактор прицепĕ çине тиесе ятăмăр. Вутă-шанкăна пĕр çĕре купа туса хутăмăр. Пирĕн çак ĕç вицĕ куна тăсăлчĕ. Çынсем ĕç пĕтерсен каçалапа пурте урама тирпей-илем кĕртме васкарĕç. Халĕ пирĕн ял пĕвисем тинех çӳп-çапран тасалчĕç. Шыв хĕррине ансан кăмăл çĕкленет.

Пĕвесем хĕрринче халĕ пулă тытса ларма та, шыва кĕме те питĕ аван. Малашне япăхтарас марччĕ хамăрăн тавралăха, упраса хăварасчĕ çак илеме.

Çак ĕçсене хутшăнакансене вара пурне те тав сăмахĕ калас килет. Уйрăмах Н.Е. Федоров нумай тăрăшрĕ. Вăл тăрăшнипех пирĕн ял татах та ытларах хитреленчĕ. Çавăн пекех Ю. Дмитриев, Г.Т. Дмитриева, А. Иванов, Э. Иванова, А. Михайлова, П. Петрова, В. Алексеев, Л. Николаева, Г. Перлов, Р. Перлова, А. Игнатьев, Г. Федорова, З. Петухова, Л. Николаев, Л. Николаева, А. Александров, И. Семенов, Р. Афанасьев, Р. Матвеев, А. Егорова, И. Никитина тăрăшса вăй хучĕç.

Ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле ачисем те, мăнукĕсем те ялти пĕвесене тасатма пулăшрĕç. Вĕсем те аслисенчен тирпейлĕхе вĕренччĕр, ăна ан япăхтарччăр. Тирпейлĕ пулсан хамăра та питĕ аван.

**С. ГЕРАСИМОВА.**

Налуксем

# Вăхăтра тӳлес пулать

2010 çулхи пĕрремĕш çур çулта районĕпе тĕрлĕ шайри бюджетсене пĕтĕмпе 69782 пин тенкĕ укçа куçарнă. Ку вăл иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан 104,6 процент пулать. Çав шутран федераллă бюджета 7212 пин тенкĕ хывнă е иртнĕ çулхин 90,7 процентĕ чухлĕ. Республика бюджетне куçарнă сумма 24024 пин тенкĕ (109,4 процент), вырăнти бюджета куçарнă сумма 38546 пин тенкĕ (104,7 процент).

Вырăнти бюджет ытларах уйрăм çынсенчен илекен налукран пухăнать. Çур çул итогĕсемпе вăл 31815 пин тенкĕпе (82,5 процент) танлашнă. Çĕр налукĕ 1146 пин тенкĕ (2,9 процент), вмененнăй тупăш çине хуракан пĕрлехи налук 4220 пин тенкĕ (10,9 процент) пулнă.

2010 çулхи 6 уйăх хушшинче налук тӳлевĕсем енĕпе парăм 1274 пин тенкĕ чухлĕ чакнă, кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне 8966 пин тенкĕпе танлашнă. Вăл шутран федераллă налуксем – 4595 пин тенкĕ, регион налукĕсем – 2199 пин тенкĕ, вырăнти налуксем – 963 пин тенкĕ, ятарлă налук режимлĕ налуксем – 1209 пин тенкĕ.

Кивĕ парăм 1904 пин тенкĕ чухлĕ чакнă, 1905 пин тенкĕпе танлашнă. Вăл шутран вырăнти налуксем енĕпе 339 пин тенкĕ пулнă.

Уйрăм предприятисемпе организацисен парса татман кивĕ парăмĕсем уйрăмах пысăк. Парăмсем налук тӳлевĕ енĕпе те, пĕрлехи социаллă налук енĕпе те, обязательнăй пенси страхованийĕн страховани взносĕсем енĕпе те пур. Пысăк парăмлă предприятисемпе организацисем шутĕнче «Трест № 3 Спецмонтажгаз» хупă акционер обществи, «Агро-Урожай» хупă акционер обществи, «Моргаушагропромснаб» муниципаллă унитарлă предприяти, «МилТрейд» чикĕллĕ яваплăхлă общество, «Агрофирма «Лидер» чикĕллĕ яваплăхлă общество, «Агрофирма «Хлебороб» чикĕллĕ яваплăхлă общество, «Трасса М-7» чикĕллĕ яваплăхлă общество, «Моргаушрайбыт» чикĕллĕ яваплăхлă общество, «Чăваш сăри» чикĕллĕ яваплăхлă общество, «Удача» чикĕллĕ яваплăхлă общество, «Передовик» ял хуçалăх производство кооперативĕ, Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕ, «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕ – ăратлăх заводĕ, «Динамо» ял хуçалăх производство кооперативĕ, ялти «Росагро» производствăпа потребитель кооперативĕ.

Парăмçăсем хушшинче уйрăм çынсем те сахал мар-ха. Кунта чи малтанах Л.И. Васильевăна, М.А. Егорова, Э.В. Колесниковăна, В.М. Махонина, В.И. Иванова, Р.В. Егорова, Г.И. Белугина, В.А. Гаврилова, А.Н. Васильева, Н.В. Тихоновăна асăнса хăварас пулать.

Налук инспекцийĕ çавăн пирки çирĕппĕн аса илтерет. Налуксене вăхăтра тӳлесе тăнин тата парăмсене парса татнин социаллă пĕлтерĕшĕ пысăк. Мĕншĕн тесен вĕсем тĕллевлĕ налуксем шутланаççĕ, çынсене пенсисемпе тивĕçтерме, вĕсене социаллă тата медицина пулăшăвĕ пама каяççĕ. Кунпа пĕрлех вырăнти тата республика шайĕнчи наци проекчĕсене епле пурнăçласси те налуксем пухасссипе тачă çыхăннă. Айтăр-ха налуксем тӳлессипе парăма кĕрсе ытлашши тăкаксем тăвар мар, парăм «шăтăкне» чавар мар. Мĕншĕн тесен налук тӳлессине тăсса пынине пула кайран налукпа пĕрлех пенисем, патшалăх пошлини тата исполнительнăй тӳлевсем те тӳлеме тивĕ. Апла пулсан пур налука та вăхăтра тӳлер.

**И. ШОРОНОВА,**
**налук инспекцийĕн парăмсене анализ тăвас, отчетлăх тата йĕркелесе пырас енĕпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ.**

# Муркашсен – Пыл уявĕ

Уяв

***2010 çулта Муркаш районне культура территорийĕ тесе палăртнă. Чăваш Республикин Президенчĕн Грантне çĕнсе илессишĕн культурăпа искусство тĕлĕшĕнчи проектсен республикăри конкурсĕнче çĕнтернĕ пур инноваци проекчĕсене те пирĕн район территорийĕнче пурнăçлаççĕ.***

Сентябрĕн 3-мĕшĕнче Уйкас Янасал ял тăрăхне кĕрекен Васкасси ялĕнчи Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕнче Чăваш Республикинчи культура событийĕсен сеть марафонне уçаççĕ тата «Сывлăх – пыл хурчĕн çунаттисем çинче» ятпа Пыл уявĕ иртет. Мероприятие Чăваш Республикин Культура, национальноç ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕсен министерстви, Чăваш Ен Культура министерствин Чăваш Республикинчи «Культура программисен дирекцийĕ» автономлă учрежденийĕ, Муркаш район администрацийĕ ирттереççĕ. Унта республикăри хурт-хăмăр ăстисем, экологсем, районти çамрăк экологсем, министерствăсемпе водомствăсен представителĕсем, пĕтĕмĕшле врач практикин уйрăмĕсен врачĕсем, культура ĕçченĕсем, уйрăм предпринимательсем, суту-илӳ тата общественность апатлану ĕçченĕсем хутшăнаççĕ. Мероприятие пĕтĕмпе 500 ытла çын хутшăнмалла.

Çав кун хурт-хăмăр ăстисен, Чăваш Ен экологĕсен (республикăри пур районсенчен те хутшăнаççĕ), районти çамрăк экологсен çавра сĕтелĕ пулать. Вĕсем актуаллă проблемăсене тата хурт-хăмăр ĕрчетессин малашлăх ыйтăвĕсене сӳтсе яваççĕ. Н.В. Никольский музейĕнче «Хурт-хăмăр ĕрчетни – сывлăх çулĕ» экспозици тата Сывă экологи площадки уçăлаççĕ. «Пылпа – сывлăх тата нумай çул пурăнасси патне» выставка-ярмăркка ĕçлет. Унта республикăри хурт-хăмăр ăстисем тĕрлĕ сортлă пыл, пыл продукчĕсем тăратаççĕ.

Муркаш районĕнчи хурт-хăмăр ăстисем хушшинче «Чи лайăх пыл» конкурс ирттереççĕ. Çавăн пекех «Вĕлле хурчĕ – ылтăн хурт» ятпа сăн ӳкерчĕксен конкурсĕн итогĕсене пĕтĕмлетеççĕ. Конкурс итогĕсем тăрăх чи лайăх сăн ӳкерчĕксен выставкине йĕркелеççĕ. Конкурс вара августăн 6 – 26-мĕшĕсенче иртет, ыйтса пĕлмелли телефон: 62-6-36.

Кунĕпех мероприяти участникĕсене районти пултарулăх тата ача-пăча коллективĕсем ташă-юрăпа савăнтарĕç.

**Т. КОРОЛЬКОВА,**
**Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотека директорĕ.**

# Ăста кадрсем хатĕрлеççĕ

Вĕренӳ

***ЧР Ял хуçалăх министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх шкултан вĕренсе тухнисен тата ытти çамрăксен Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче малалла вĕренсе хăйсен ăсталăхне ӳстерме, ял хуçалăхне кирлĕ професси суйласа илме май пур. Çак вăхăта куçăнлă майпа вĕренме заявленисем йышăнасси вĕçленнĕ ĕнтĕ. Çапах та заочно майпа вĕренме кĕме заявлени пама вăхăт пур. Вĕсене августăн 15-мĕшĕччен йышăнаççĕ.***

**Ял хуçалăх академийĕнче çак специальноçсемпе кадрсем хатĕрлеççĕ:**
– экономика тата управлени;
– ял хуçалăхĕ тата пулă хуçалăхĕ;
– агрономи;
– агроинженери;
– зоотехни;
– транспорт хатĕрĕсем.

Асăннă специальноçсемпе 4 çултан тытăнса 5 çул таран вĕренмелле.

Куçăнлă майпа вĕренекенсем çулталăкне 12 пин тенкĕ, заочно вĕренекенсем 8 пин тенкĕ тӳлеççĕ.

**Вĕренме кĕрес текен çыннăн йышăну комиссине хăйĕн пымалла. Пĕрле çак документсем пулмалла:**
– çын кам пулнине, гражданлăха çирĕплетекен документ;
– пĕтĕмĕшле вăтам е ятарлă вăтам пĕлӳ илнине çирĕплетекен документ;
– пĕрлехи патшалăх экзаменне (ЕГЭ) тытнине çирĕплетекен документ;
– 3х4 см. калăпăшлă 6 сăн ӳкерчĕк;
– ĕç кĕнекин ксерокопийĕ (нотариус е кадрсен пайĕнче çирĕплетни кирлĕ);
– мăшăрланнин свидетельствин ксерокопийĕ.

Академи адресĕ: 428003, Шупашкар хули, К. Маркс урамĕ, 29, тел.: 62–23–34, 62–21–55 (йышăну комиссийĕ), e-mail **pk@.academy.cap.ru.**

Вулакан пултарулăхĕ

# Çулсем иртнĕçем...

(«Пурнăç авăрĕ» ярăмран)

Ах, тĕнче, сутă тĕнче,
Пысăк та эс, пĕчĕк те.
Çухатас марччĕ кăна
Тĕнчемре, савни, сана.

Санпа чух кăна хаваслă,
Санпа чух тĕнче те аслă.
Ĕç кĕрлет ман аллăмра,
Юн вĕрет ӳт-пĕвĕмре.

Сансăр пурнăç, чăн та, хĕсĕр,
Çулĕ пăрнăç, тĕлсĕр-пĕлсĕр.
Маншăн эс ялан, савниçĕм,
Иксĕлми таса çăл куçăм.

Асăмра каллех санпа
Тĕл пулма васкатăп,
Хампа хам арпашăнса
Яшлăха путатăп...

– Хĕр чысне эпĕ упрарăм,–
Вăтанса куçран пăхатăн,–
Саншăнах тупа та турăм,
Ан васка...– куçна хупатăн.

Ешĕл симĕс улăх урлă
Ярăнса эсĕ утатăн,
Сывлăм ӳкнĕн тăнлав тарлă –
Юрласа утă çулатăн...

Хыпăнса килсе кĕретĕн
(Эс ĕçрен киле килетĕн),
Юратса пуçран лăпкатăн.
Ачашла мана, айванăм.

Кунпа çĕр ылмаштарса
Яшлăх анчĕ анăça.
Хул çинчи çĕклем халь йывăр,
Сарлака тĕнче те тăвăр.

**Василий МАКСИМОВ.**

# «Çамрăк чух лашапа ĕçлерĕм»

Ятлă çынна ял савать

Кĕске калаçура «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» уçă акционерлă обществăра нумай çул водительте ĕçлекен Валерий Алексеевич Данилов хăй фабрика тунă чух лашапа ĕçленине палăртсарах каларĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ çакă. Лашапа ĕçлесех фабрика тунинчен тата унăн аталанăвне пуçласа янинчен паян Валерий Алексеевич хăй те тĕлĕнет. Тĕлĕнмелле, анчах çапла пулнă.

Чурикассинче çуралса ӳснĕ каччă шкул пĕтерсенех хăйĕн пурнăçне чăхчĕп фабрикипе çыхăнтарнă. Лашапа сахал стройматериал турттарнă-и унта!

Ĕçленĕ вăхăтрах водитель профессине алла илнĕ Валерий 1974-1976 çулсенче Совет çарĕнче службӑра пулнă хыççăн та фабрикăнах таврăнать. Чылай хушă тиев турттаракан автомашинăпа ĕçленĕ Валерий Алексеевича 1993 çулта атобус шанса параççĕ.

– Хамăр ĕçченсене канма кайма е ытти çĕре тухса çӳреме ансат пултăр тесе тăрăшатăп. Автобуса ялан юсавлă тытасси, çынсен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтересси – манăн пĕрремĕш тĕллев, – терĕ уçă кăмăллă водитель.

Арăмĕпе Надежда Николаевнăпа вĕсем икĕ хĕр



çуратса ӳстернĕ, пурнăç сулĕ çине кăларнă. Иккĕшĕн те паян Коракассинче икĕ хутлă пурăнмалли çуртсем. Çак пуянлăх, паллах, Валерий Алексеевич тăрăшмасăр та пулман. Тăрăшуллă ĕçченĕн ырă ячĕ çак вăхăтра нихăçан та Хисеп хăми çинчен кайман.

– Пирĕн пурнăç вăл йăлтах ачасемшĕн. Вĕсем пурнăçра хăйсен вырăнне тупнишĕн мăшăрăмпа иккĕн паян савăнатпăр кăна, – терĕ автобуса таппратнă май Валерий Алексеевич.

Ĕçчен çыннăн пурнăçĕ ăннишĕн манăн та чунăм хĕпĕртерĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Çырни патне таврăнса

# Ырă пуçарусене малалла çул парасчĕ

Тăван яла килсен урамсемпе, çырмаçатрасемпе иртетĕп те хамăр тăван ене хамăрах вараланинчен тĕлĕнетĕп. Çавăнпа та паянхи çырура çивĕч асăрхаттару тунишĕн ертӳçĕсенчен те, вырăнсенчи депутатсенчен те, ял çыннисенчен те маларахах каçару ыйтатăп.

Ĕçĕ вара кашнин кусне куллен тĕл пулакан тасамарлăх пирки. Пирĕн куллен-хи пурнăçăмăрта эпир «шурă пушмаксемпе» каяшсем тăрăх утнăнах туйăнать. Çырма-çатрасен те сăнĕ тĕппипех пĕтрĕ. Компьютер ĕмĕрĕнче пурăнакан тата цифрăллă технологисен ĕç-хĕлне алла илекен ачасен шывра ишме вĕренесси пысăк ыйту пулса тăчĕ. Ишме пĕлекенсен те кăçалхи пек шăрăх кунсенче шыва кĕмелли меллĕ юхан шыва е пĕве-кӳлĕне шыраса çăмăл автомашинăна вуншар километр чуптарас пулать. Ку вăл паян. Анчах эпир çамрăк чухнех, пĕр 30-40 çул каялла, ялсем таврашĕнче 5-6-шар пĕве куçа илĕртетчĕ. Вĕсене тасатса тăрассине те ял çыннисемпе ачасем хăйсемех пурнăçласа пыратчĕç. Колхоз техникăпа тивĕçтерни ĕçсене самаях хăвăртлататчĕ. Çак тирпейлĕ вăхăтсене паян аса илмелли тата мăнуксене юмах евĕр каласа памалли кăна юлать.

Пĕве хĕррисене, шыв-шур юхнă вырăнсене «хăюллă» ял çыннисем тĕрлĕ ăпăртапăрпа тултарма пуçласан, ăслăраххисем те ĕçченреххисем (вĕсем хур-кăвакал усратчĕç, çырмари шывпа пахчасене шăварассине йĕркелетчĕç) кун пек юраманни пирки каланисем, асăрхамна ыйтнисем, шыв тарасси çинчен систернисем паян те асрах. Вĕсем калани вăхăт çитрĕ. Кăçалхи шăрăх çул пĕвесем ăшăхланса юлчĕç е пачах типрĕç. Çăлсен тĕпĕнче те витрепе ăсмалăх шыв та курăнмасть. Хамăр тирпейсĕрлĕхе пула шыв пирĕнтен «тарчĕ». Шыв та чĕрĕскер-çке, пирĕн хăтланăва вăл та вулать-курать.

Шыв чаксан çырансене тĕрлĕ ăпăр-тапăртан тасатма калаçнă çынсен те вăхăчĕ çитрĕ, анчах вĕсем вырăнтан хускални курăнмасть. Шывран пушаннă пĕвесемпе кӳлĕсем паян ĕмĕрхи тимĕртăмăрпа, вуншар çул каяллахи кĕленчесемпе тавралăха «илем» кӳрсе выртаççĕ. Вĕсен çумĕпех эпир куллен ĕçе çӳретпĕр, ырă ĕмĕтсемпе влаçрисем патне каятпăр т. ыт. те.

Вырăнти самоуправлени пирки саккун ĕçлеме пуçлани тата ялти ĕçсемшĕн ял тăрăхĕсем яваплă пулса тăни пушаннă пĕве-кӳлĕсене тасатассипе те ыйтусем тăрататъ, анчах темшĕн-çке никам та вырăнтан тапранасшăн мар.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, ял старостисем, ял тăрăхĕсен депутачĕсем! Ăçта сирĕн пуçарулăх? Район хаçатĕнче нумаях пулмасть редакци ĕçченĕ Анатолий Белов пуçарнипе Кашмашра пĕве тасатни пирки çырнине вуларăм. Çак ырă пуçарăва сӳнме парас марччĕ. Кам-ха черетре? Умра суйлавсен пулни ял тăрăхĕсен паян ĕçлекен хăш-пĕр пуçлăхĕсемпе депутачĕсене те вырăнтан хускатмалла пек те... Тирпейлĕхĕ хамăршăнах пулнине шута илсе вырăнсенче ятарлă хушу кăлармалла та çырма-çатраран ăпăр-тапăра пуçтарассине йĕркелемелле. Çакна тăвайратпăр-тăк эпир хамăр çут çанталăкран та ыррине кĕтейретпĕр.

Ял тăрăхĕсене илсен тăван тавралăха илемлетессипе ĕç вырăнтан тапранни Муркаш ял тăрăхĕсен пуçланнине те «Çĕнтерӳ ялавĕнчех» вуласа пĕлтĕм. Н. Никитин тĕрĕс çул çинче. Паянхи шăрхра пурнăçламан ĕçсем кайран вуншар хут хаклăраха ларĕç.

**В. МАСТЕРОВ, ĕçпе вăрçă ветеранĕ.**

# Пушар сăлтавĕ – преступлени

Следстви комитетĕнчен

Çурла уйăхĕн 4-мĕшĕнче район хаçачĕ Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Мишер ялĕнче тухнă пушарта 3 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлни пирки пĕлтернĕччĕ. Следстви ĕçĕ пынă май вăл вăхăтра пушар сăлтавĕ пирки калама иртерехчĕ. Паян вара следствин малтанхи утăмĕсем пирки те калама пулать.

Районти пушар хуралне утă уйăхĕн 29-мĕшĕнче 1 сехет те 58 минутра Мишер ялĕнче пушар тухни пирки пĕлтерсен, паллах, никам та ку ĕç хыççĕнче уголовнăй преступленин тăни пирки калама пултарайман. Ун пек шухăш та пулман. Анчах пушара сӳнтерсе пĕтерсен кил-çуртран юлнă кĕлпе пĕрле виçĕ çын виллине тухсан ку пушар тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçарма тивнĕ.

Халĕ çакă паллă. 2010 çулхи утă уйăхĕн 29-мĕшĕнчи пĕр сехет тĕлĕнче эрех ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ В. Мишерте пурăнакан Г. килне пырса кĕрет. «Хутшăну» никĕсĕнче В. хăйĕн арăмне Г. çумне хушни тата вĕсем çав кас Г. килĕнче пĕрле çывăрни пулнă. Çавна пĕлсе В. мăшăрне вĕлерес шутпах «хăнана» пынă.

Хăйĕн усал ĕмĕтне пĕтĕм обществăшăн хăрушă мелпе пурнăçа кĕртме В. гражданин Г. пурăнакан пӳрт алăкне нумай хаçат хурса тивертсе ярать. Çав вăхăтра кĕвĕç арçын килте ытти çынсем те пулма пултарасса, хăй шут тытни вĕсемшĕн те хăрушă пуласса пĕлнĕ. Анчах...

Юри тунă усал ĕçре, пушарта, В. гражданин хăйĕн мăшăрĕнне С-нне çеç мар, çак ялтах пурăннă 3-па И. гражданинсен пурнăçне те вăхăтсăр татнă.

Çак преступление тунă тесе шутланакан В-на Раççей Федерацийĕн Уголовлă-процессуаллă Кодексĕн 91-92 статйисемпе килĕшӳллĕн утă уйăхĕн 30-мĕшĕнче 20 сехет те 30 минутра тытса чартăмăр.

2010 çулхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнче В. гражданина пĕтĕм обществăшăн хăрушă мелпе виçĕ çынна вĕлернĕшĕн Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 105 статйин 2-мĕш пайĕн «а» тата «е» пункчĕсенче пăхнă преступление тунă тесе айăплав тăратрăмăр.

Айăпланакан 42 çулхи В. гражданин унччен те судпа айăпланнă пулнă, ниçта та ĕçлемен. Ăна следстви пынă вăхăта саккунпа килĕшӳллĕн ирĕкрен хăтартăмăр.

**Л. ДАВЛЕТШИН, следстви комитечĕн следователĕ.**

01 пĕлтерет, асăрхаттарать

# Çулăм хăрушлăхĕ

Типĕ те шăрăх çанталăк кашнинех асăрханаллă пулма хистет.

Çурла уйăхĕн 5-мĕшĕнче пасара васканă водитель автомашина тĕлĕшпе тимлĕхе «сӳнтернĕ». Анчах... маларах калани пекех ăна инкекĕ те кĕттермен. 9 сехет çурăра Муркаш пасарĕ çывăхĕнче кĕске замыкание пула çăмăл автомашинăна «хĕрлĕ автан» пырса кĕрет. Районти пушар хуралĕ вăхăтра çитнипе автомашинăна çăлса хăварма май килчĕ.

Çурла уйăхĕн 4-мĕшĕнче кăнтăр кунĕнчех Нискассинче пурăнакан 76 çулхи пĕр «паттăр» гражданин та хăйĕнчен ăслăрах çын тек çук тесе шутласа арендăна илнĕ çĕр участокĕнче ăпăр-тапăр çунтарса «тăван тавралăха хăт кĕртме» шутлать. Пĕчĕк шăрпăк вăйĕ наччасрах 150 тăваткал метр çинчи курăка хăй ытамне илет. Юрать пушар хуралĕ вăхăтра килсе çитрĕ...

Юлашки çулсенче çисĕм çапасси мĕншĕн нумайланчĕ-ха? Шăрăх çанталăкра сывлăш тасамарланса çитнипе вăл электричество токне çăмăллăнах çĕр çине яма пуçларĕ. Çакна пĕлсе ял çыннисен кашнин кил-çуртнех çисĕм çапасран хӳтĕлемелли устройствăсемпе тивĕçтермелле, кашни килтех телевизор антеннисем пулнăран аслатиллĕ çумăр килес умĕн антеннăсене телевизорсенчен кăлармалла. Кĕсье телефонĕсемпе усă куракансен те аслатиллĕ çумăр вăхăтĕнче телефонсене сӳнтермелле. Аслатиллĕ çумăр вăхăтĕнче тимĕр хатĕрсем тытма тата вĕсен çывăхĕнче тăма юрамасть. Çак ансат йĕркесене пăхăнсан çисĕм çапасран пăрăнса иртме пулать.

**И. СМИРНОВ,**
**патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн ертӳçи.**

Çур çул ĕçĕсене пăхсан

# Йĕрке пăсакансен хисепĕ чакрĕ

Пĕрремĕш çур çул хыçа юлнă май çак вăхăтри ĕçсене пĕтĕмлетме те вăхăт. Çавăнпа та нумаях пулмасть Раççей Федерацийĕн прокуратури çумĕнчи Следстви комитечĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн ĕçне те пăхса тухрĕç.

Пирĕн следстви пайне Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Муркаш, Етĕрне районĕсем кĕреççĕ. Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта асăннă тăрăхсенче çулталăк каяллахинчен 79 преступлени сахалрах пулнă (691). Çакă йĕрке хуралçисем ăнлантару ĕçне тивĕçлĕ шайра пурнăçланине кăтартса парать.

Иртнĕ çур çул хушшинче пирĕн следстви пайне пăхăнакан районсенче уйрăмах йывăр преступленисем 6 (пĕлтĕрхи çак вăхăтра 11 пулнăччĕ), йывăр преступленисем 149 (179) пулнă.

Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта районсем хушшинчи следстви пайне преступленисем пулни çинчен 366 пĕлтерӳ (пĕлтĕр – 517) çитрĕ. 65-шĕ тĕлĕшпе (49) уголовнăй ĕç пуçартăмăр, 189-шĕ тĕлĕшпе (360) уголовнăй ĕç пуçарма хирĕçлерĕмĕр, 92 (105) пĕлтерĕве следствин ытти органĕсене ярса патăмăр.

Следстви пайĕн следователĕсем çак хушăра судсене 41 ĕç ярса панă пулсан, Муркаш районĕпе (кунта уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсемпе ĕçлеме Л. Давлетшин следователе çирĕплетнĕ) – 15 ĕç.

Пирĕн следовательсем коррупци ыйтăвĕсемпе те нумай ĕçлеççĕ. Вĕсем хушшинче ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, пушар хурал ĕçченĕ т. ыт. те.

Пирĕн ĕç ăнăçăвĕнче вырăнсенчи йĕрке хуралçисен пулăшăвĕ вырăнлă пулнине палăртса малашне те пĕрле ĕçлессе ĕненес килет. Эпир пурсăмăр та пĕр çыхăра пулсан çеç саккуна пăхăнасси халăхăмăр хушшинче çӳллĕ шайра пулĕ.

**С. САВЕЛЬЕВ,**
**Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн пуçлăхĕ.**

Килти хушма хуçалăх

# Виноградран – варени

***Кăçал пирĕн килти хуçалăхра виноград ăнса пулчĕ. Çанталăкĕ шăрăх тăрать, виноград йывăççисене вара шăварсах тăмăпăр. Унран варени хатĕрлемелли пĕрпĕр рецептпа паллаштарайăмăр-ши?***

**А. ИВАНОВА.**
Мăн Сĕнтĕр.



– Сире эпир Санкт-Петербургра 1913 çулта пичетленсе тухнă «Хозяйственный ежегодник. 500 советов-рецептов по сельскому хозяйству и домоводству» кĕнекере пичетленĕ пĕр рецептпа паллаштарас тетпĕр. Унта виноградран варени çапла хатĕрлеме сĕннĕ:

Шултра, сĕтеклĕ, ытлашши пиçсе кайман çырласене ăшăрах сироп ăшне ямалла. Сиропне вара унччен 1 кĕрепенкке (409,1 грамм) çырлана тата 1 кĕрепенкке сахăра вĕретсе хатĕрлемелле. Çак хутăша пĕр хут вĕретме кĕртмелле те чашăкран пушатмалла. Икĕ талăк иртсен сиропа сăрăхтарса илсе каллех вĕретес пулать. Вăл кăштах сивĕнсен унта çырласене тепĕр хут ямалла. Кайран вара варение банкăсене ярса хупламалли кăна юлать.

Миграци службинчен

# Патент илесси пирки

Çу уйăхĕн 19-мĕшĕнче «Раççей Федерацийĕн уйрăм саккун акчĕсене» тата «Раççей Федерацийĕнчи ют çĕршыв граждансен право йĕрки çинчен» саккуна улшăнусем кĕртесси çинчен» Федераллă саккун вăя кĕчĕ. Унпа килĕшӳллĕн виза илмесĕр кĕмелли йĕркепе Раççей территорине кĕнĕ ют çĕр-шыв гражданинĕ вăхăтлăх ĕçлеме ĕç килĕшĕвĕпе е гражданла право килĕшĕвĕпе килти хушма хуçалăхра пĕр уйăхран пуçласа виçĕ уйăхчен ĕçлеме патент илме пултарать. Ăна илекенĕн патента 12 уйăха тăсма та ирĕк пур.

Патент илме ют çĕр-шыв гражданинĕн (Чăваш Республикине вăхăтлăх килнин тата кунта вăхăтлăх пурăнаканăн) ĕç миграци пайне (Шупашкар хули, К. Маркс урамĕ, 46-мĕш çурт. Тел.: 62-21-04, 62-92-12) патент илме ыйтса çырмалла, хăй камне çирĕплетекен документ, миграци картти, 3х4 см. тĕслĕ пĕр сăн ӳкерчĕк памалла.

**З. СОРОКИНА,**
**федераллă миграци службин Муркашри территори пункчĕн пуçлăхĕ.**

# Шомикри хирĕç тăру

**Пурнăç**

***Турă çынна çĕр çинче пĕр пурнăç кăна панă. Çавăнпа ăна чыслăн та тивĕçлĕн пурăнса ирттерме тăрăшмалла. Уйрăмах ватлăх çулĕсем канлĕ те лăпкă пулни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Хальхи 80 çула çывхаракансем е унран аслăраххисем вара Аслă Отечественнăй вăрçăн тути-масине те чăтса ирттернĕ, выçăллă-тутăллă пурăннă кунсем вĕсен асĕнчен нихăçан та тухас çук. Вăрçă хыççăн юхăннă халăх хуçалăхне те вĕсенех çĕклеме тивнĕ. Анчах мĕнле пурнăç кĕтет-ха вĕсенчен хăшĕсене ватлăх çулĕсенче?***

Акă пĕр тĕслĕх кăна. Шомик ялĕнче çуралса ӳснĕ Соня тата Михаил Париковсем çемье çавăрса виçĕ ывăл пăхса ӳстернĕ, пурнăç çулĕ çине кăларнă. Ватă ĕнтĕ вĕсем. Пĕри 83, тепри 84 çулта. Аслă ывăлĕсем уйрăлса тухнă, вĕсен хăйсен çемйисем. Кĕçĕнни Николай вара ашшĕ-амăш килĕнче хăйĕн мăшăрĕпе Надеждăпа пурăнать. Вĕсен ывăлĕ хулара ĕçлет.

Анчах мăшăрланнă кунран тытăнсах Надежда хăйĕн хуньамăшне юратмасть, килĕштермест. Вăхăт иртнĕ май кин тени хуньамăшĕ çине алă çĕклеме те именми пулать. 2010 çулхи июнĕн 17-мĕшĕнче те çапла пулса тухать. Ирхи 7 сехет тĕлĕнче Надежда Парикова хăйĕн хуньамăшĕпе хирĕçӳ пуçлать, ватă çынна темиçе хутчен швабрăпа çапать. Ватă çын кăшкăрнине илтсе чупса пынă Николай мăшăрĕ кăна урса кайнă хĕрарăма лăплантарма пултарать. Çапла вара Надежда Парикова Раççей Федерацийĕн Уголовнăй кодексĕн 116-мĕш статйин 1-мĕш пайĕпе пăхнă преступление тăвать.

2010 çулхи июлĕн 23-мĕшĕнче асăннă преступлени тĕслĕхне Муркаш районĕн 2-мĕш номерлĕ суд участокĕн миравай судйи Е.Г. Никитина пăхса тухнă. Мĕн тетĕр, Н. Парикова унта айăпа йышăнса ӳкĕннĕ тетĕр-и? Çук çав. Надежда Парикова никамран та хăраман «паттăр» пулас. Хăй ăнлантарса панă тăрăх вăл çав кун ирхи 6 сехетре ĕне сума тухнă иккен. Кайран ĕнене кĕтĕве хăваласа кайнă. Кил картишне кĕрсен хуньамăшĕ пахча еннелле утнине курнă. 8 сехет тĕлнелле вара ĕçе ачасен сывлăха çирĕплетмелли «Лесная сказка» лагерьне сухан леççе пама кайнă. 9 сехетчен каялла таврăннă та каçченех пахчара ĕçленĕ. Вăл пахчара ĕçленĕ чухне хуньашшĕпе хуньамăшĕ вăхăтлăх пахчана тухнă, мунча патĕнче ларнă. Вăл Соня Парикована алăпа мар, çахмапа та кӳрентерсе хирĕçмен иккен. Анчах та мăшăрланнăранпах хăйĕн хуньамăшне килĕштерменнине судра та йышăнать Надежда Парикова.

Судра Надежда Парикова хăйĕн айăпне йышăнмасть пулин те, тĕрĕслĕх çиеле тухатех. Вăл айăплă пулнине айăплав свидетелĕсен кăтартăвĕсем те çирĕплетсе параççĕ.

Суд приговорĕ вара çапла: Надежда Владимировна Парикована РФ Уголовнăй кодексĕн 116-мĕш статйин 1-мĕш пайĕпе пăхнă преступление тунăшăн (çын çине алă çĕкленĕшĕн) айăплă тесе йышăннă, ăна 140 сехет обязательнăй майпа ĕçлеттермелле тунă.

Кунсăр пуçне суд Надежда Владимировна Париковăран София Гавриловна Парикована мораль тĕлĕшĕнчен кӳнĕ тăкакшăн 4 пин тенкĕ шыраса илме, представитель услугисемшĕн 895 тенкĕ те 14 пус, пĕтĕмпе 4895 тенкĕ те 14 пус шыраса илмелле тăвать.

Ăс кĕчĕ-ши çак хĕрарăма халĕ? Татах алă çĕклĕши вăл тивĕçлĕ ватă çын çине? Пурăнăпăр – курăпăр.

**P.S. Материала хаçата калăпланă май ватă çынсенчен – Соньăпа Михаил Париковсенчен – татах тепĕр çыру. Ăна вырăнти Катькас ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.Г. Лебедев ячĕпе янă. Копине редакцие çитерчĕç. Çемьери харкашусем, ытти тивĕççĕр япаласем халĕ те вĕçленмеççĕ пулас. Хăçанччен-ши?**

***Хисеплĕ вулакансем, сире вара хăвăрăн çемьери хутшăнусем пирки пирĕн пата çырса пĕлтерме ыйтатпăр. Килĕшӳпе çураçу хуçаланать-и сирĕн çемьесенче?***

**В. ШАПОШНИКОВ.**

# Алăк çĕмĕрсе кĕнĕ те...

**Сăмах – йĕрке хуралçине**

Ĕçрен хăраканăн, анчах пуяс шухăша кун йĕркинчен кăларман çамрăк çыннăн вăй-хал нихăçан та иксĕлменнине кулленхи пурнăç кăтартсах пырать.

Пĕр тĕслĕх çеç. Çĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕ. 11 сехет те 15 минут. Ыранхи куна пăхса пурăнакан кам хирте, кам станок умĕнче, кам ытти вырăнта тар юхтарса ĕçлет. Унччен те икĕ хутчен Шупашкар хулинчи Мускав район сучĕн приговорĕпе судпа айăпланнă Андрей Максимов вара тар юхтарса çамрăк вăя çухатма шутламан. Хырăмĕ вара ĕçлемесессĕн те выçать.

Юлташĕсемпе пĕрле çĕртме уйăхĕн 9-мĕшĕнче 19 сехет тĕлĕнче А. Максимов автомашинăпа Мăн Сĕнтĕр еннелле пулла кайма тухать. Кăмăркасси ялне çитсен ӳпле туса вырнаçсан çамрăксем пулă тытма пуçлаççĕ. Вăхăт «лайăх» иртет. Тепĕр кунне 11 сехет тĕлĕнче вĕсем апат-çимĕç туянма Мăн Сĕнтĕре тухаççĕ. «24 сехет» ятлă магазин тĕлне çитсе чарăнсан юлташĕсем Андрея укçа парса магазина яраççĕ. Магазинне кĕмелли алăк уçă, анчах шалти алăк çинче çăра çакăнса тăрать. Çĕрле сутмалли пĕчĕк чӳрече кантăкне те шпингалетпа питĕрнĕ. Хăна алăкран шаккасан хирĕç хурав пулмасть. Çакă çамрăкăн пуçĕнче усал шухăш çуратать. Алăкри пĕчĕк кантăка çапса çĕмĕрсе яш магазина кĕрет. Прилавоксем патне пырса хăйне кирлĕ таварсене суйлама пуçлать. Кĕçех пакетра «Белый Агат» коньяк пĕр кĕленче, икĕ кĕленче «Арарат» коньяк, пĕр кĕленче «Немиров» настойка, пĕр кĕленче «Водка», «Билайн» тӳлев картти, 10 пачка «Винстон» сигарет, 6 кĕленче «Праздничное» сăра, пĕр «Парне» бальзам вырăн тупаççĕ, кассăри 7222 тенкĕ те 84 пус укçа та «хăна» кĕсйинче вырнаçать.

19 çулхи каччă «кирлĕ таварсене» илсе автомашинăри юлташĕсем патне пырсан хăйĕн «ĕçĕ» пирки пĕр сăмах та шарламасть. Хыççăн вара пĕве хĕрринче «уяв» пуçланать. Тепĕр кунне ирхи 7 сехетре ыйхăран вăраннă «пулăçсем» хулана таврăнаççĕ. «Улах ĕç» пирки юлашĕсене шарламан Андрей 7222 тенкĕ укçана хăйне валли апат-çимĕç продукчĕсем илсе пĕтерет. Хăйĕн «ĕçĕ» пирки «паттăр каччă» темиçе кун иртсен çеç юлташĕсене уççăн каласа парать.

Йĕрке хуралçисем çак киревсĕр ĕçĕн çул-йĕрне самантрах уçса пачĕç. Саккун çулĕнчен пăрăннă 19 çулхи çамрăка халĕ суд тенкелĕ кĕтет.

**Е. КРУГЛОВА,**
**шалти ĕçсен пайĕн следстви уйрăмĕн следователĕ.**

# Тавах сире, учительсем!

**Вулакан пултарулăхĕ**

***2010 çул – Учитель çултталăкĕ. Учитель тĕрлĕ енлĕ пĕлӳ парса çамрăк ăрăва пурнăçăн анлă çулĕ çине ярса пусма пулăшать, обществăна кĕме, Тăван çĕр-шывăн чăн-чăн гражданинĕ пулма хатĕрлет. Ачасем кашниех тĕрлĕ характерлă пулсан та, вĕрентекен пĕр шухăшлă коллектив туса хума пултарать, пĕр-пĕрне хисеплеме, туслă пурăнма вĕрентет, асамлă пĕлӳ тĕнчи тăрăх таçта та илсе çитерет. Ача сана куртăр, илттĕр, итлетĕр тесен вĕрентекенĕн вăйĕ, тӳсĕмлĕхĕ, чăтăмлăхĕ пысăк пулмалла. Пирĕнтен кашниех хамăрăн вĕрентекенсене, шухăшлама тата ăнланма, ыйăвлăхсене çĕнтерме, ырăпа усала уйăрма, хамăрăн вăй-хала шанма вĕрентекенскерсене, асра тытать, тав сăмахĕ калать.***

Учитель! Çак сăмах авал,
Халь те, пуласлăхра та
Кашни çын чĕринче. Упрар,
Ăна çӳлтен-çӳле çĕклер.
Учитель ĕçĕ çăмăл мар,
Анчах та пархатарлă.

Малтан мала утать пĕрмай
Çул кăтартса мухтавлă.
Класа кĕрсен тӳрех пире
Сывлăх сунать: «Ыр кун сире».
Ларатпăр шăппăн тӳрленсе,
Юлас килет веçех илтсе.

Пĕтĕм вăйран вăл тăрăшать,
Сана, мана вăл пулăшать.
Шутлаттарать, вулаттарать,
Туслăх мĕнне ăнлантарать.
Пĕрле вылять, юмах калать,
Тем ыратсан пуçран шăлать.
Иртсе каять вара тӳрех,
Пит тăрăшас килет пушшех.
Юрлать, ташлать сцена çинче,
Васкать, ĕçлет кил картинче.
Хатĕрленет вăл урока,
Нумай вулать вăл – пĕр купа.
Ыр сăмахпа пире мухтать,
Япăх тусан кăштах ятлать.
Пăхать пире вăл юратса,
Тăван анне пекех савса.
Чунне парать ачасене,
Халне парать-çке вĕсене.
Тавах сире, учительсем,
Юратнă, хаклă çыннăмсем.

**Ольга ПАВЛОВА, ЧПУ студентки.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления


СРОЧНО!!! Требуются на крупные пищевые производства в Подмосковье
**упаковщицы-фасовщицы**
**грузчики**
Питание, проживание предоставляются.
Вахта 30/30, 15/15.
Тел.:8(8352)23-22-22, 23-22-23. **1-5.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 4-5.**

* * *

**Продаю новую двухкомнатную квартиру по ул. Парковая, индивидуальное отопление, балкон, подвальное помещение. Тел.: 8-917-652-71-99.**

* * *

**Строительная фирма набирает рабочих строительных специальностей: штукатуров-маляров, каменщиков, отделочников, кровельщиков, разнорабочих и т.д. Жилье и спецодежда предоставляется бесплатно. Зарплата от 750 до 1500 руб. в день. Зарплата стабильная. Работа на гособъектах РФ. Прямой работодатель. Тел.: 8-926-77-66-955 или 8-927-844-97-92. Алексей. 3-5.**

* * *

**Продаются щенки русской гончей породы, 2,5 месяца. Тел: 8-960-305-41-87.**

* * *

**Утерянный диплом об окончании Полтавского инженерно-строительного института, выданный в сентябре 1980 года на имя Якоб Василия Ивановича, считать недействительным.**

* * *

**Организация продает щебень, песок, гравмассу (ОПГС), железобетонные изделия, асфальт. Возможна доставка. Тел.: (8352)57-42-81, 57-33-83, 8-903-358-36-23. 8-8.**

* * *

**ООО «СТАДЕКС» 15 августа в районном Доме культуры с 9-00 до 12-00 часов производит безболезненное прокалывание ушей, носа (пистолетом) специальными серьгами. Стоимость от 450 руб. до 800 рублей.**

* * *

**Продается сварочный агрегат САК (двигатель Т-40). В рабочем состоянии. Тел.: 8-961-342-30-64, 8-927-996-46-16.**

* * *

**13 августа с 8-00 до 18-00 часов Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви из натуральной кожи Ульяновской, Беларусской фабрик и других российских производителей. 2-2.**

* * *

**Продается пшеница, прошлогодний урожай.**
**Тел.: 8-905-027-81-99.**

* * *

**Продается трактор Т-25, большая кабина, 1994 года выпуска, плуг трехкорпусный, косилка КС-2,1, прицеп 1 ПТС-2, культиватор. Тел.: 8-919-666-14-50.**

* * *

**Пилĕк уйăхри вăкăр сутатăп. Тел.: 8-960-306-49-88.**


* * *

**Участница долевой собственности Александрова Тамара Зиноновна, 16.10.1955 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, с. Тойгильдино, ул. Западная, д. 41, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Хорнойское, на территории землепользования СХПК им. Ленина, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:140501 площадью 1,16 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Хорнойского сельского поселения.**

**2. Александровой Тамаре Зиноновне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, с. Тойгильдино, ул. Западная, д. 41.**

* * *

**Участник долевой собственности Александров Владимир Геннадьевич, 10.08.1955 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, с. Тойгильдино, ул. Западная, д. 41, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Хорнойское, на территории землепользования СХПК им. Ленина, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:140501 площадью 1,16 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Хорнойского сельского поселения.**

**2. Александрову Владимиру Геннадьевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, с. Тойгильдино, ул. Западная, д. 41.**

* * *

**Участница долевой собственности Шашкова Тамара Вячеславовна, 17.08.1963 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Мижары, ул. Центральная, д. 29, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Большесундырское, на территории землепользования СХПК «Нива», участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:050801 площадью 1,22 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Большесундырского сельского поселения.**

**2. Шашковой Тамаре Вячеславовне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Мижары, ул. Центральная, д. 29.**

* * *

**Участница долевой собственности Шашкова Римма Яковлевна, 05.08.1930 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Мижары, ул. Центральная, д. 29, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Большесундырское, на территории землепользования СХПК «Нива», участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:050801 площадью 1,12 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Большесундырского сельского поселения.**

**2. Шашковой Римме Яковлевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Мижары, ул. Центральная, д. 29.**

Коллектив СХПК «Передовик» выражает глубокое соболезнование директору ОАО «Птицефабрика «Моргаушская» Ванеркину Н.Г. по поводу безвременной кончины брата

**ВАНЕРКИНА**
**Анатолия Григорьевича.**


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учреждениĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 2 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла таврăса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Белов А.П.**
**Пичете панă 10.08.2010 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3999.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.